25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
АПРЕЛЬ
21
ЫТЛАРИКУН
93(6028) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕççынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыраканнисен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

85. Вăрнар районĕнчи Булатово ялсоветне кĕрекен Молотов ячĕпе тăракан колхоз (колхоз председателĕ С. Г. Тихонов юлташ). Колхоз çуракинче акма кирлĕ вăрлăха пĕтĕмпех сортласа хатĕрлесе хунă. Ялхуçалăх машинисене, урапасене, лаша кӳлмелли хатĕрсене йăлтах юсанă. 3.000 лав тислĕк, 1.200 лав компост, 750 лав торф, 67 центнер кĕл, 180 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 200 центнер минераллă удобрени хатĕрленĕ. Колхоз хамиватсене кайне кирлĕ чухлĕ пĕтĕмĕшпех хатĕрлесе хунă. Лашасем хырти ĕçе тухма хатĕр тăраççĕ, вĕсенчен пĕр пайне канма тăратнă. Яровизаторсене, бригадирсене, овощеводсене, махорководсене пурне те вĕрентсе хатĕрлесе çитернĕ. Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе колхозра В. Бурмистров юлташăн бригадипе колхозница Молгаева юлташ хăйсене уйрăмăнах палăртнă. Молгаева юлташ вăрлăхлăх тырра сортланă чухне нормăна 150 процент тултарса пынă.

86. Шăмăршă районĕнчи «Знамя Октября» колхоз (колхоз председателĕ Богатова юлташ). Çуракинче акма кирлĕ вăрлăха колхоз пĕтĕмпех сортласа хатĕрлесе хунă. Плугсене, сеялкăсене, сӳресене, лаша кӳлмелли хатĕрсене йăлтах юсанă. Колхоз хире 2.000 лав тислĕк кăларнă, 20 центнер кĕл, 15 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хунă.

87. Роман Никитович Никитин—Шăмăршă районĕнчи Мордовско-Тюзинский ялсоветне кĕрекен «Маяк» колхозри колхозник. Никитин юлташ тăрăшса ĕçленипе колхоз çуракинче акма кирлĕ вăрлăха пĕтĕмпех çавра ала витĕр ярса сортласа хатĕрлесе хунă. Çав ĕçре Никитин юлташ нормăна 200 процент тултарса пынă.

88. Сĕнтĕр районĕнчи «Хлебороб» колхоз (колхоз председателĕ А. А. Андреев юлташ). Колхоз çуракинче акма кирлĕ вăрлăха пĕтĕмпех сортласа хатĕрлесе хунă, акма юрăхлă кондицине çитернĕ. Хире 600 лав тислĕк кăларнă, 50 центнер кĕл, 10 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Плугсене, сеялкăсене, сӳресене тата лаша кӳлмелли хатĕрсене пĕтĕмпех юсаса çитернĕ. Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе уйрăмăнах 2-мĕш бригада хăйне палăртнă, ку бригадăра бригадир пулса Иванов юлташ ĕçлет.

89. Сĕнтĕр районĕнчи Юнгă ялсоветне кĕрекен «Новая Юнга» колхоз (колхоз председателĕ Е. И. Салдаева юлташ). Çуракинче акма кирлĕ вăрлăха тата страховой фондсене колхоз пĕтĕмпех сортласа хатĕрлесе хунă, акма юрăхлă кондицие çитернĕ. Ялхуçалăх инвентарьне, лаша кӳлмелли хатĕрсене пурне те юсаса хатĕрленĕ. Хĕллехи агротехникăллă мероприятисен планне ытлашшипех пурнăçа кĕртнĕ: хире 4.583 лав тислĕк кăларнă, 34 центнер кĕл, 15 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хунă. Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе колхозра Виноградовпа Золин юлташсен бригадисем уйрăмăнах хăйсене палăртнă.

Çуракинчи агитацин задачисем

Кăçалхи çураки асăлă отечественнăй вăрçă условийĕсенче пулса иртет. Кăçал колхозсен акмалли çĕр лаптăкне чылай сармалла тата нумай районсенче халичченхи акмаллă çĕнĕ культурăсене акмалла пулать. Çапла пулин те кашни колхозăн çуракине срокра тата пысăк пахалăхпа вĕçлемелле. Пур ĭывăрлăхсене те çĕнтерсе çуракине ăнăçлă вĕçлеме колхозсемпе МТС-сен ĕçĕсенче çирĕп организованность пулмалла кирлĕ.

Çуракине йĕркеллĕ тата вăхăтра ирттерес çĕрте, паллах, большевикла агитаци пысăк вырăн йышăнса тăмалла. Пропагандистсемпе агитаторсем колхозниксен массине хăйсен большевикла сăмахĕсемпе çуракине срокра тата пысăк çитĕнӳсемпе вĕçлеме мобилизацилемелле. Çавăнпа та ялти агитколлективсен партиллĕ пропагандăпа агитаци ĕçне вăйлăн сарса ямалла. Агитаторсен кашни колхозника, МТС-ри кашни работника вăрçă вăхăтĕнчи çураки планне срокра тултарни фронтра тăвакан çĕнтерӳпе пĕр танах пулланы çинчен ăнлантарса памалла. Мĕншĕн тесен, фронтра тăммане çĕнтерессе тылри халăх хăй ĕçне лайăх туса тăниччен, вăл фронта кирлĕ япаласемпе пуринпе те шĕрмаях пулăшса тăниччен килет.

Агитаци ĕçĕнче уйрăмăнах çуракинче малта пыракансен опычĕсемпе усă курма пĕлмелле: уйрăм колхозсем, МТС работникĕсем е уйрăм колхозниксем тунă çитĕнӳсемпе пĕтĕм районри колхозниксене паллаштармалла, пурне те çав малта пыракансем пек ĕçлеме вĕрентмелле. Çавăнпа пĕрлех агитаторсен япăх ĕçлекенсене те асăрхаса ăнлантарса, вĕсем мĕн пирки кая юлса пынин сăлтавĕсене палăртса памалла. МТС-семпе колхозсенчи çитменлĕхсене, йăнăшсене, уйрăм çынсен сӳреклĕхне, юлхавлăхне пĕр шеллемесĕр критикăламалла. Агитатор сăмахĕсем колхозниксене умра тăракан пысăк ĕçсене туме хăрӳллĕ хавхаланупа çĕклетчĕр. Çуракинче малта пыракан колхозсемпе МТС-сен, пултарулăн ĕçлекен бригадăсемпе звеносен, уйрăм колхозниксемпе трактористсен паллă çитĕнӳĕсем çинчен пĕтĕм район е пĕтĕм республика халăхне хаçатсем урлă, радио урлă, сăмахпа калакан агитаци урлă пĕлтерсе тăмалла.

Агитаторсем—колхозпа колхоз, бригадăпа бригада, трактористпа тракторист, колхозникпе колхозник хушшинче социализмлă ăмăрту пуçласа ярас тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем тума пултараççĕ. Кăçалхи çуракинче социализмлă ăмăртупа ĕçлессине сарса яни питех те пысăк вырăн йышăнса тăмалла.

Çуракинче агитаци ĕçĕн пур майĕсемпе те усă курни кирлĕ: бригадăсемпе звеносем вĕсене вăхăтра канни е апатланнă самантсенче вĕсене пĕчĕк докладсем туса памалла, калаçусем туса ирттермелле, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерӳĕсемпе ытти паллă хыпарсене вуласа памалла, уйрăм бригадăсемпе колхозниксен паллă çитĕнĕвĕсем çинчен каламалла тата ыт. те. Çураки пуçлансанах агитаци ĕçне те уя кăлармалла. Агитаторăн колхозниксенчен юлма юрамасть, колхозниксем ăçта—агитаторăн та унта çитмелле.

Çуракинчи агитацие анлăн тата ăнăçлăн туса пырасси—агитаторсен коллективне пултарулллă çынсене суйласа илнинчен тата вĕсен ĕçĕсене тĕрĕс йĕркелесе янинчен килет. Çураки умĕн кашни агитколлективăн составне тĕрĕслесе тухмалла, коллектива çĕнĕ çынсем хушса вăйлатмалла. Уйрăм агитаторсем мĕнле ĕçленине агитколлективсен тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла тата вĕсене шĕрмаях пулăшса пымалла. Çавăнпа та агитколлективсене ертсе пыма политика тĕлĕшпе çирĕп тата агитаци ĕçĕсене лайăх пĕлекен çынсене уйăрса лартмалла. Парти райкомĕсен пропагандăпа агитаци отделĕсен çураки умĕн агитколлективсен руководителĕсене пухса, çураки тĕлĕшпе ятарласа семинарсем туса ирттермелле.

Çураки вăхăтĕнче агитаци ĕçĕпе уйрăмăнах районри хаçатсен пысăк ĕçсем туса пымалла. Вĕсен колхозсенчи паллă ĕçсем çинчен, уйрăм колхозниксемпе трактористсем тăвакан çитĕнӳсем çинчен мĕнпур колхозниксен массисене хăвăрт пĕлтерсе тăмалла. Районри хаçатсен колхозсенчи ĕç дисциплинишĕн тата колхозниксен ĕç условийĕсене лайăхлатасшăн çине тăрса кĕрешсе пымалла.

Çураки вăхăтĕнче стена хаçачĕсем те пысăк вырăн йышăнса тăмалла. Кашни колхозрах, кашни бригадăрах стена хаçачĕ туха тăтăр; вĕсен лайăх ĕçлекен колхозниксене мухтаса, сӳрекĕн ĕçлекенсене, лайнсене пĕр хĕрхенмесĕр критикăламалла.

Политпросвет учрежденийĕсен (вулав çурчĕсен, колхоз клубĕсен, библиотекăсен) çураки вăхăтĕнче политикăллă литературăпа колхозниксем ĕçленĕ çĕре—уя çитерсе тăма тăрăшмалла. Çураки агротехники çинчен колхозниксене ăнлантарса парасси политпросвет учрежденийĕсен хисеплĕ ĕçĕ пулса тăрать.

Кăçалхи çураки кампанийĕ пур агиттколлективсемшĕн те пысăк экзамен вырăнĕнче шутланать. Çавна астуса тăрса, вĕсен хăйсен ĕçĕсене тĕплĕн тата пултарулăн туса пыма тăрăшмалла.

Сталин юлташ колхоз хресченĕсен отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи задачисене палăртса парса: «...пирĕн колхозникĕсем, арçынсем те хĕрарăмсем те, хăйсен ĕçĕсенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлени тата вĕсем фронтпа çĕршыва валли тырă, аш-какай, промышленность валли чĕрхавар ытларах та ытларах парса пыни кирлĕ...» терĕ. Çуракине ăнăçлăн ирттерни Сталин юлташ колхозниксем умне лартнă задачăна пурнăçа кĕртме май парать. Агитколлективсем пултарулăн ĕçлесе пырсан, пирĕн колхозсем çак задачăна пысăк чыслăхпа пурнăçа кĕртме пултарĕç.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 19-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 19-мĕшĕнче фронтра нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

Апрелĕн 18-мĕшĕнче противникăн 14 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 5 самолет пĕтнĕ.

* * *

Апрелĕн 18-мĕшĕнче пирĕн авиаци чăçĕсем нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 50 автомашинине ытла, боеприпассем тиенĕ 15 лавне, 16 зенитнăй тата полевой орудине, зенитнăй пулеметсен виçĕ точкине, 20 минометне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, противникăн пехотине пĕр ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть пĕр кун хушшинче халăх пурăнакан пункта йышăнса илнĕ тата тăшманăн темиçе блиндажĕпе окопне тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 200 çын ытла вилсе юлнă. Совет артиллеристĕсем тӳрĕ персе нимĕçсен танкне çĕмĕрнĕ тата виçĕ оруди, пысăк калибрлă виçĕ пулемет пĕтерсе тăкнă. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн боецсем, сасартăк пырса çапса, гитлеровецсене укреплени тунă районран хĕссе кăларнă, нимĕçсенне 14 пулемет, икĕ миномет, нумай винтовка, радиостанци тата ытти тĕрлĕ çар хатĕрĕсем тытса илнĕ. Противникăн çĕршер çынни вилсе е аманса юлнă.

* * *

Павлов юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделени (Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕ), минометсемпе пулеметсенчен тата винтовкăсенчен персе, нимĕçсен контратакине сирсе пăрахнă, нимĕçсене пысăк çухату кӳнĕ. Çапăçу хирĕ гитлеровецсен салтакĕсемпе офицерĕсен виллисемпе витĕннĕ. Пирĕн батарейăсем çав кун тăшманăн штабне аркатса тăкнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, нимĕçсен грузсем тиенĕ темиçе вуншар лавĕсемпе автомашинисене пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра красноармеецсен отрячĕ противника вăрмантан хăваласа кăларнă, противник çавăнта атака тумашкăн вăй пухма хăтланнă пулнă. Çав çапăçура боецсем тăшманăн 27 дзотне, икĕ туппине пĕтерсе тăкнă, виçĕ пулемет, 180 винтовка, миномет тата ытти тĕрлĕ çар хатĕрĕсем тытса илнĕ.

* * *

Беззубов юлташ командир пулса тăракан чăрри снайперсем тăшмана пысăк сиен кӳреççĕ. Виçĕ уйăх хушшинче красноармеец Чухряев нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 99 çынна, боец Гребенюк—45 çынна, снайпер Прохоров—30 çынна, сержант Афанасьев нимĕçсен фашистла захватчикĕсене 34 çынна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Старши лейтенант Гоголевăн батарейинчи зенитчиксем (Хĕвеланăç фрончĕ) 4 кун хушшинче нимĕçсен 4 бомбардировщикне персе ӳкернĕ.

* * *

Смоленск облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенче кĕрешекен К. юлташăн партизанла отрячĕ гитлеровецсене хирĕç пулса иртнĕ пĕр çапăçура нимĕçсен 86 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă тата станковăй пулемет, 19 винтовка, 7 револьвер, походнăй кухня тытса илнĕ.

* * *

Пирĕн чăçсем нимĕçсен 170-мĕш пехотнăй дивизийĕн 391-мĕш полкĕнчи пĕрремĕш батальонăн врачĕ дивизи врачĕ патне çырса янă доклада тытса илнĕ. Çав докладра çапла каланă: «...Пĕрремĕш батальон пысăк çухатусем тӳссе пычĕ. Хĕвелтухăçĕнчи походра поход пуçланнăранпах кĕрешсе пынă офицерсемпе унтер-офицерсенчен тата салтаксенчен халь уйрăм çынсем кăна тăрса юлнă. Батальон юлашки вăхăтра пушшех те пысăк çухатусем тӳсрĕ... Салтаксем нумай начарланнине палăртнă. Вар-хырăм чирĕпе чирлекенсем нумай. Кĕçĕ, эгзема тата пыйтă питĕ нумай саралнă. Çапăçусенче пысăк çухатусем тӳссе пынипе салтаксен шухăшкăмăлĕсем нумай пусăрăннă. Пур событисем çине те пĕр интересленмесĕр пăха пуçларĕç»...

* * *

Нимĕçсен Ойген унтер-офицерĕ çумĕнче вăл килне яма ĕлкĕреймен çырăва тупнă. Çав çыруран нимĕç салтакĕсен шухăш-кăмăлĕсем пусăрăнни курăнса тăрать. Акă мĕн çырнă Ойген хăйĕн тăванĕсем патне: «...Сире тата тепĕр çырайăп-и ĕнтĕ—пĕлместĕп... Вырăссем нумай тыткăна илчĕç... Кунтан тĕрĕс-тĕкел тухасса пĕрре те шанас килмест. Эпĕ халаласа çырнине эсир шанчăклă çĕре хутăр пуль те-ха ĕнтĕ. Эпĕ халаланине пурне те Эльзăпа анне илччĕр. Вырăссен самолечĕсем пирĕн пуç тăрринче ухмаха ернĕ пек явкаланса вĕçсе çӳреççĕ; мĕнле-ха мана халиччен пуля е снаряд ванчăкĕ пырса лекмерĕ,—çавăнтан тĕлĕнетĕп...»

* * *

Дани патриочĕсем нимĕç оккупанчĕсене хирĕç тăрассине вăйлăлатнă. Нимĕç çарĕ валли ĕçлекен заводсемпе фабрикăсенче март уйăхĕнче 50 хут ытла пушар пулнă. Вут-çулăмра тĕрлĕ çар хатĕрĕсем, консервăсем, спирт нумай пĕтнĕ.

* * *

Нимĕçсем хуçаланнине пула Латви халăхĕн выçăхса пурăнма, нумай хĕн-хур чăтса ирттерме тивет. Гитлеровецсем, саранча пек сырса илсе, нацин паха япалисене тата çынсен хăйсен пурлăхĕсене çаратса тухнă, пĕтерсе тăкнă. Пур япалана та Германие илсе кайнă. Хальхи вăхăтра нимĕçсем хресченсенчен акма тесе сыхласа хăварнă юлашки тырăсене те туртса илесшĕн. Анчах та, нимĕçсен радио апрелĕн 18-мĕшĕнче пĕлтернĕ тăрăх, «Латвире тырă тăратасси халиччен нимĕçсем кĕтнĕ результатсене парайман». Латви хресченĕсем оккупантсене вăйлăн хирĕç тăраççĕ, тыррисене шăтăксене пытарса хураççĕ. Гитлеровецсем ялсемпе хуторсенче килĕрен-киле ухтарса çӳреççĕ. Çĕршер хресчене арестлесе концентрациллĕ лагерьсене янă.

Апрелĕн 20-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 20-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

* * *

Старостин юлташ командир пулса ертсе пыракан артиллеристсем (Хĕвеланăç фрончĕ), хăйсен орудийĕсенчен персе, юлашки кунсенче нимĕçсен 9 дзотне, 31 блиндажне çĕмĕрнĕ, пĕр танкне аркатнă, 21 пулеметне тата 3 минометне пĕтерсе тăкнă. Совет артиллеристĕсем тӳрĕ пенипе нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 1200 çынран кая мар пĕтнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн часть, çĕрле атака туса, халăх пурăнакан пункта йышăннă, нумай тĕрлĕ трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче нимĕçсен автоматчикĕсем пирĕн чăçсем вырнаçса тăракан çĕре сăрхăнса кĕме тата совет войскисен тылне дезорганизацилеме хăтланнă. Максимов юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн часть гитлерла автоматчиксен пысăк ушкăнне çавăрса илнĕ те, хаярран çапăçса, нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра тăшманăн 35 автоматчикĕ пирĕн войскăсен тылĕнчи вăрмана сăрхăнса кĕнĕ. Нимĕçсем куçса пынине Петров юлташ командир пулса тăракан подразделенири красноармеецсем асăрханă. Пирĕн боецсем тăшмана кĕтмен çĕртен пырса çапнă та автоматчиксене 35-шне те пĕтерсе тăкнă.

* * *

Лейтенант Степанов юлташ командир пулса ертсе пыракан танк экипажĕ пĕр çапăçура хăйĕн танкĕн вут-çулăмĕпе тата гусеницисемпе тăшманăн 2 блиндажне нимĕçсен пехотипе пĕрлех аркатнă, нимĕçсен танксене хирĕç перекен 8 орудине тата 4 минометне, вĕсен расчĕсемпе пĕрлех, пĕтерсе тăкнă.

* * *

Поляксен Казимир Соколинский ертсе пыракан партизанла отрячĕн ăнăçлă боевой ĕçĕсем çинчен çĕнĕ хыпарсем илнĕ. Партизансен разведки пĕр чугунçул станцийĕ патĕнче нимĕçсен çарĕн склачĕсем пуррине асăрханă. Вагонсенчен бензин пичкисем, продовольстви хунă ещĕксемпе михĕсем кăларнине разведчиксем пĕр талăк хушши сăнаса выртнă. Çав сведенисене илсен, партизансен отрячĕ çĕрле нимĕçсен склачĕ çине пырса тапăннă. Нимĕçсен часовойĕсемпе хуралĕсене пĕтерсе тăкса, партизансем горючи цистернисене тата продовольстви склачĕсене вут тивертнĕ. Çав операци вăхăтĕнче партизансем нимĕçсен 67 салтакне тата 5 офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен унтер-офицерĕ Леопольд Гандль Вена хулинчи лазаретран Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнчи Карл Крихенбаум фельдфебель патне çапла çырать: «Пирĕн хула ытларах та ытларах лазаретсемпе тулса пырать. Лазаретсем çумăр хыççăн çĕр айĕнчен кăмпасем шăтса тухнă пекех шăта-шăта тухаççĕ. Мĕн чухлĕ çуртйĕре йышăнчĕç ĕнтĕ. Анчах та Российăран килсе тăракансене пурне те вырнаçтарма вĕсем çителĕксĕр. Аманнисем кунсерен вĕçĕ-хĕррисĕр килсе тăраççĕ. Пире пурне те вилĕм кӳрекен çак вăрçă хăçан пĕтĕ-ши ĕнтĕ!»

* * *

Ленинград облаçĕн нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă Высотово ялĕнче пурăнакан çынсем гитлерла бандитсен тискер ĕçĕсем çинчен, аманнă красноармеецсене асаплантарнисем çинчен каласа панă. Йывăр аманнă 7 боеца çарамаслантарса, нимĕçсем вĕсене автоматсенчен персе пăрахнă. Тыткăна лекнĕ красноармеецсен тепĕр группине гитлеровецсем нумай вăхăт

Юлашки 2-мĕш страницăра

ЗАЕМ УКÇИНЕ СРОКЧЕН ТӲЛЕСЕ ТАТАР!

Ĕçе сӳрĕклетмелле мар

Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне вырнаçтарас ĕç республикăра кăçал нихăçанхи пек мар ăнăçлăн пулса пырать. Апрелĕн 20-мĕш тĕлне республикăра çĕнĕ заема 61.746.000 тенкĕлĕх вырнаçтарнă. Çакă вăл бюджетра палăртнипе танлаштарсан 126 процент пулать. Малта пыраканисен шутне Сĕнтĕр, Советски, Чкаловски, Хĕрлĕ Чутай тата ытти районсем кĕреççĕ.

Анчах чылай районсем заем ĕçне юлашки кунсенче сӳрĕклетни, уĕсемсемпе лăпланса ларма тытăнни палăрать. Çакă вăл сиенлĕ йăла. Ĕççынисен политикăллă активлăхĕ халĕ калама çук вăйлă. Çак активлăх заема татах та ăнăçлăнрах вырнаçтарма лайăх майсем туса парать. Вăл майсемпе вара хăшпĕр районсенче усă курма пĕлмеççĕ. Заем çырăнмасăр юлнă ĕççыннисем халĕ районсенче чылай-ха, вĕсем пурте заем çырăнса илесшĕн. Вĕсене çак паха ĕçе явăçтарас тĕлĕшпе партипе совет организацийĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлемелле.

Çакна вара хăшпĕр районсенче манаççĕ. Сăмахран, Улатăр, Канаш, Ишлей тата ытти районсенче заем сарас ĕçе чарса лартнă. Канаш районĕнче апрелĕн 18-мĕш тĕлне плана 124,4 процент тултарнă пулнă, апрелĕн 20-мĕш тĕлне çав цыфра пачах улшăнман. Шăмăршă районĕнче апрелĕн 18-мĕш тĕлне плана 106,6 процент тултарнă, апрелĕн 20-мĕш тĕлне те çавăн чухлех.

Заем укçине пухас ĕçе уйрăмăнах вăйлатса пыни кирлĕ. Апрелĕн 20-мĕш тĕлне республикăра 27.443.000 тенкĕ пухнă. Ку енĕпе Сĕнтĕр тата Хĕрлĕ Чутай районĕсем пример кăтартаççĕ. Сĕнтĕр районĕ колхозникĕсем хушшинче сарнă заем укçине 100 процентчĕпех пухса çитернĕ, Хĕрлĕ Чутай районĕ 97,3 процент чухлĕ пухнă. Çырăннă заемăн укçине пухас тĕлĕшпе Канаш, Йĕпреç, Çĕрпӳ районĕсенчи партипе совет организацийĕсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Канаш районĕнче заем укçине 26,5 процент çеç пухнă. Кунта агитаци ĕçне начар туса пыраççĕ, заем укçине халех пани государствăна пысăк усă кӳни çинчен колхозниксене ăнлантарса памаççĕ.

Заем укçине срокчен тӳлесе татса, çĕршыв оборонине татах та вăйлăнрах тĕреклетер!

Пирĕн пулăшу

— Килĕрех, тĕпелерех иртĕр. Правительство отечественнăй вăрçă заемне кăларни çинчен илтнĕ хыççăн эпĕ хамах правленине пырас тенĕччĕ-ха,—тесе кĕтсе илчĕ фронтовик арăмĕ Анастасия Воробьева заем уполномоченнăйĕсене Кузнецовăпа Наперстинăна. — Анчах пĕчĕккисенчен хăтăлма май çук вĕт. Хăвăр килни питех те лайăх пулчĕ-ха ку.

А. Воробьева Чкаловски районри Катекри Молотов ячĕпе тăракан колхоз членĕ. Вăл çĕнĕ заема 300 тенкĕлĕх çырăнса, укçине те çийĕнчех тӳлерĕ.

— Çак заемăн укçи, — терĕ вăл, — захватчиксене çапса аркатнă çĕре каять. Манăн упăшка темиçе уйăх ĕнтĕ фронтра çапăçать. Эпĕ ăна çак заема çырăнса илнипе пулăшас тетĕп.

Кузнецовăпа Наперстина ыттисем патне васкарĕç.

— Кĕрĕр-ха, кĕрĕр, — чӳречерен чĕнсе илчĕ вĕсене тепĕр патриотка Серафима Мордвинова юлташ. Вăл сĕм сукăр пирки колхозра ĕçкунĕсем тăвайман. Çапах та заема 100 тенкĕлĕх çырăннă. Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне апрелĕн 18-мĕш тĕлне колхозра пĕтĕмпе 41.550 тенкĕлĕх сарнă. Колхоз председателĕ Я. Кузнецов 2.000 тенкĕлĕх, аслă конюх В. Веревкин 1.000 тенкĕлĕх, инвалид П. Семкин 400 тенкĕлĕх çырăнса, укçине те тӳленĕ.

ЧКАЛОВСКОЕ, апрелĕн 18-мĕш. (Хамăр корр.)

КИЛХУÇИ ХĔРАРĂМĔСЕН ПАТРИОТИЗМĔ

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр., телефонпа). Хулари килхуçи хĕрарăмĕсем отечественнăй вăрçă заемне 38.630 тенкĕлĕх çырăннă. Вăл шутран çуррине тӳлесе татнă та ĕнтĕ.

Килхуçи хĕрарăмĕсем хушшинче заема сарас тĕлĕшпе Дмитриева, Степанова, Чернова, Иванова, Пишкина активисткăсем тăрăшса ĕçлерĕç. Вĕсенчен Пишкина юлташ кăна 61 килхуçи хĕрарăмне 3.955 тенкĕлĕх заем çырăнтарнă.

Çĕнĕ заема пысăк хаваслăхпа çырăнса килхуçи хĕрарăмĕсем хăйсен патриотизмне кăтартаççĕ. Казанкина, Ялфимова—200-шер тенкĕлĕх, Наместникова, Николаева, Степанова, Котикова, Цапина, Мирошкина, Богоявленская—100-шер тенкĕлĕх çырăнса, укçине те тӳленĕ.

«Большевик» заводри килхуçи хĕрарăмĕсем хушшинче заема 2.425 тенкĕлĕх сарнă.

Х. ЛИСИН.

Трактористсем пиншер тенкĕлĕх çырăнчĕç

КУКЕÇ. (Телефонпа). МТС-ри трактористсемпе комбайнерсем тата служащисем хушшинче заем сарас ĕç ăнăçлă иртрĕ. 5-мĕш бригадăн бригадирĕ Столяров юлташ пуринчен малтан 1000 тенкĕлĕх çырăнса, ыттисене те çавăн чухлех çырăнма чĕнчĕ. Унăн чĕнĕвне йышăнса, пурĕ 22 çын пиншер тенкĕлĕх çырăнчĕç.

МТС-ра заема пĕтĕмпе 69.440 тенкĕлĕх сарнă. Халĕ подписка укçине пухас ĕç пырать.

СМИРНОВ,
МТС политотделĕн начальникĕ.

Бюджетпа палăртнинчен икĕ хут ирттерсе

СĔНТĔР. Атапай ялсоветĕнчи колхозниксем, единоличниксем тата служащисем 1942 çулти Военнăй Заема пурте пĕр çын пек çырăнса, апрелĕн 14-мĕш тĕлне укçине те тӳлесе татрĕç. Ялсоветĕнче заема бюджетпа палăртнинчен икĕ хут ирттерсе сарнă. Çак ĕçре уйрăмăнах «Хĕрлĕ Ялав» тата Свердлов ячĕпе тăракан колхоз председателĕсем, Вязовпа Зайцев юлташсем, Е. Музыков, Т. Новикова, Тимофеева, Быкова комсомолецсем тăрăшса ĕçлерĕç.

Е. САДОВНИКОВА,
Ялсовет исполкомĕн председателĕ.

Шупашкар ĕççыннисен массăллă воскресникĕ

Республикăри хуласемпе ялсенче халĕ тасалăхпа йĕркелĕхшĕн кĕрешӳ пырать. Çавна май апрелĕн 19-мĕшĕнче, канмалли кун, Шупашкар хулинчи ĕççыннисен массăллă воскресникĕ пулса иртрĕ. Воскресника 1000 çын ытла тухрĕ. Вĕсем Шупашкар станцинче ĕçлерĕç: 10.000 тăваткăл метр чухлĕ чугун çул линине юртан, çӳп-çапсенчен, çуркуннехи пылчăкран тасатрĕç, перрон çине шлак сапса тухрĕç, линии çинчи грузсене складсем çывăхне йăтса купаларĕç тата ытти те. Воскресникре уйрăмăнах Росглаввино совхозĕпе çыхăну управленин коллективĕсем лайăх ĕçлерĕç.

Шкулсем фронта пулăшаççĕ

Фронтпа Хĕрлĕ Çара пулăшасси — ĕççыннисен хисеплĕ ĕçĕ пулса тăчĕ. Çак ĕçе Канашри Добролюбов ячĕпе тăракан педучилище коллективĕ те хастарлăн хутшăнать. Педучилищĕри преподавательсемпе вĕренекенсем «Пионер Чувашии» танк тума 543 тенкĕ пухса парĕç. Унсăр пуçне икĕ хут воскресник туса 750 тенкĕ ĕçлесе илчĕç те укçине оборона фондне куçарчĕç. Мухтавлă фронтовиксем патне Май уявĕ ячĕпе парнесем яма 1.895 тенкĕ пухса парĕç. Парнесем пучĕпе 10 алшăлли, сăмса тутрисем, енчĕксем, махорка тата ытти те ячĕç.

Е. РОМАНОВА.

СОВЕТСКОЕ. Кунти вăтам шкул коллективĕ вĕренӳ ĕçне кирлĕ пек туса пынипе пĕрлех фронта пулăшас тĕлĕшпе те хастарлăн ĕçлет. Вĕрентекенсемпе вĕренекенсем, воскресниксенче тăтăшах пулса, 5.256 ĕçкунĕ тунă. Ĕçкунĕсем çине тивекен тупăшпа пĕтĕмпех оборона фондне панă. Унсăр пуçне шкулти учительсемпе служащисем хăйсен ĕçукçинчен оборона фондне 11.892 тенкĕ куçарнă, «Пионер Чувашии» танк тума 400 тенкĕ укçа, 12,5 тонна тимĕр-тăмăр пухса панă.

Шкул ачисем çар ĕçне те юратса вĕренеççĕ. Ку таранччен 228 ача ПВХО программине лайăх вĕренсе пĕтерчĕç.

Е. НИКИТИН.

ÇĔРШЫВ ВАЛЛИ ТИМĔР-ТĂМĂР

СОВЕТСКОЕ. Юлашки вăхăтра районри пионерсемпе вĕренекенсем оборона промышленноçĕ валли тимĕр-тăмăр пухас ĕçе вăйлатрĕç. Хучаш вăтам шкулĕ —5 центнер, Мăн Ямаш тулли мар вăтам шкулĕ — 4 центнер тата Тукасри «Культура» колхозри пионерсем пĕр центнер ытла тимĕр-тăмăр пухрĕç.

З. СЕВАШ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 20-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

хушши вăтамле мар хĕненĕ. Тытăшни-сем вырăнтан хускалайман пулсан, фашистла [illegible] вĕсене [illegible] çапа-çапа пĕтернĕ. [illegible] вайĕсене французсемпе италянецсем тата голландецсем 60 çын [illegible] асапланса вилнĕ. Нимĕçсен влаçĕсем çав факта çине [illegible].

* * *

Нюрнберг çывăхĕнчи хими заводĕнче апрелĕн 4-мĕшĕнче ютçĕршыв рабочийĕсем массăллăн вилнĕ. Завод [illegible] рабочисене [illegible] çине тĕрĕслесе пăхма шут тытнă.

ÇУРАКИ УМĔН

Клевер акрĕç

СЕНТЕР. Мăн Сĕнтĕр ялсоветĕнчи «Ударник» колхозăн звенийĕн бригади çак кунсенче 5 гектар çинче клевер акса хăварчĕ. Çавăн пекех Чапаев ячĕ-[illegible] не тăрăхах колхоз та уйрăм участок-сенче клевер акма тытăннă.

С. НАЛИМОВ.

Малтанхи çитĕнÿсемпе лăпланса ларнă çĕрте

ЧКАЛОВСКОЕ. (Хамăр корр., телефонпа). Районри малта пыракан «Маяк», «Хĕрлĕ Таш» тата ытти колхозсем [illegible]

Апрелĕн 17-мĕш тĕлне районри 9 колхоза 2.032 центнер вăрлăх çитмест. [illegible]

[illegible] «Правда» колхоз председателĕ [illegible]

П. НИКОЛАЕВ.

Горючи çитĕклĕ хатĕрленĕ

ТАВАЙ. Çуракине хатĕрлесе машин-тракторăн станцийĕ горючи тата сĕрмелли [illegible] «Красный Октябрь», Шмидт, Киров тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсем МТС валли горючи турттарса пачĕç.

В. ЧЕРНОВ.

Ферма валли пăрусем контрактацилеççĕ

ШАХАСАН. Чулăмăкла ялсоветне кĕрекен «Память Ленина» колхоз [illegible] ферма валли 17 пăру контрактацилерĕ. [illegible] Пăрусем авăн çитĕнеççĕ.

А. ФЕДОРОВ.

Анкарари суд

АНКАРА, апрелĕн 18-мĕш. (ТАСС). Енер Анкарари судра Гитлерăн посолĕ Папена «вĕлерме тапăннă» çинчен пулса иртнĕ ĕçе малалла пăхма тытăннă. [illegible]

Павловпа Корнилова допрос протоколĕсенчен пĕрне кăна кăтартнă. Павлова малтанхи хут следстви тунă чухне çапла каланă: «Корнилов пур фактсене те йышăнчĕ, эсĕ пустуях йышăнмастăн»,—тенĕ. Следствире çакнашкал провокациллĕ мелсемпе усă курнă факт çинчен Павлов суд протоколĕнче кăтартса хăварма ыйтать. Суд председателĕ çак фактсене чăн та, суя та темест, вăл ыйтăва пăрса ярса, иртни çинчен «мĕн калаçмалли пур» текелет. Совет граждăнĕсем хăйсене хăйсем хÿтĕлеççĕ. Суд председателĕ вĕсене çак ĕçе тума чăрмантарса пырать, часчасах вĕсен сăмахĕсене пÿлсе лартать, «вăхăт çук», тет. Анчах çав вăхăтрах айăпланакан совет граждăнĕсем тĕлĕшпе суд процесĕн нормисене пăсние унăн ирĕксĕрех йышăнма тивет.

Павлова хăйне айăплакан ĕçсем çинчен калама аран-аран сăмах параççĕ. «Эпĕ, — тет Павлов, — çак ĕçсемпе нихăш енчен те çыхăнман. Ку ĕç темĕнле трагикомеди пулса тăрать, вăл мана йĕрĕнтерет кăна. Провокаторсем çак чăн та уголовнăй ĕçе — шантажпа элеке политикăллă япала пек туса кăтартасшăн пĕтĕм вăйран тăрăшаççĕ. Вĕсем хăйсем малтанах хатĕрлесе хунă план тăрăх ĕçленĕ тата халĕ те çав план тăрăхах ĕçлеççĕ. Шантаж тăвас та элек сарас тесе кăна Папен çине вĕлерме тапăнам пекки тунă. Провокаторсем — Совет Союзĕн ылханлă тăшманĕсем, демократиллĕ çĕршывсен тăшманĕсем, çапла вара, вĕсем Турцишĕн те тăшман пулса тăраççĕ. Çак провокацие организацилекенсем халлĕхе пĕр хĕррине пăрăнса юлнă-ха, чăн айăплисем суд аллине çакланайман. Провокацийĕн тĕллевĕ — Папен çине «тапăннă» ĕçе «коммунистсем» çине йăвантарасси, çав «коммунистсене» Совет граждăнĕсемпе çыхăннă пек туса кăтартасси, çапла вара совет граждăнĕсене Турци влаçĕсем умĕнче вараласси, Совет Союзĕпе Турци хушшинчи çыхăнăва пăсасси пулса тăрать».

Павлов Абдурахманпа Сулейман провокаторсем тата вĕсен юлташĕсем туроксем мар пулнине, туроксем пулсан та «пĕр сехетлĕхе кăна туроксем» пулнине асăрхаттарать. Вĕсем тăван çĕршыв мĕн иккенне, чыслăх, принцип мĕн иккенне пĕлмен этемсем. Павлов çакна асăрхаттарать: Сулейман провокатор

[illegible] ценировкăна тăвакансем бомба хăлтĕле пăрахмаллине питĕ те пĕлсе шухăшласа хунă. Çав бомбăна Папен çине мар, Совет Союзĕн граждăнĕсем çине пăрахнă».

АНКАРА, апрелĕн 16-мĕш. (ТАСС) Суд Павлова хăйĕн сăмахне вĕçлеттермест, хăçан вĕçлеме сăмах парасси çинчен те нимĕн те шарламасть. Енер те паян та Анкарари суд свидетельсенчен ыйтать. Анчах та свидетельсен сăмахĕсем айăпланакансене хирĕçле тухаççĕ.

Папен февралĕн 25-мĕшĕнче Турци влаçĕсене бомба ун патĕнчен 6—7 метрта кăна çурăлчĕ, тесе пĕлтернĕ пулнă. Игум Торгуз, бомба çурăлнипе сăмăл суранланнă çкер, бомба Папенран 15—16 метрта çурăлчĕ, тесе пĕлтерет. Суд такси шоферĕнчен Фахрирен ыйтать. Фахри бомба çурăлнă вырăнтан 200 метрта тăнă имĕш. Вăл взрыв пуличчен темиçе минута малтан çав взрыв пулнă вырăнтан инçетре те мар автомобиль курнă, çав автомобиль çинче Корнилов ларнă имĕш. Судья Фахрирен çав автомобиль камăн пулнă-ши тесе ыйтсан, шофер вăтана пĕлмесĕрех — «совет посольствин» тесе ответлет. Корнилов çак провокациллĕ суяна часах тăрă шыв çине кăларать. Вăл Фахрирен çав автомобиль мĕн тĕслĕ пулнине ыйтать. Лешĕ вишня тĕслĕччĕ, тесе тавăрать. Корнилов суда совет посольствинче ун тĕслĕ автомобильсем пачах та çуккине асăрхаттарать.

Суд поляк инженерĕнчен Романовскирен ыйтать. Сулейманăн провокациллĕ сăмахĕсем тăрăх, вăл, имĕш, Сулеймана совет посольствипе «çыхăнма» пулăшнă. Романовский Сулеймана тăрă шыв çине кăларса, ăна тÿрех вăрттăн полици агенчĕ тесе ят парать.

Судăн черетлĕ ларăвне кĕтмен çĕртенех апрелĕн 29-мĕшне куçараççĕ. Кун сăлтавне суд Стамбулран свидетельсем килмелле, тесе ăнлантарса парать. Çак тĕлĕнмелле процеса сăнаса пыракан журналистсем çапла калаççĕ: суд ларăвне каллех тепĕр вăхăта куçарни урăхла сăлтавсенчен килет. Хальхи мĕнпур пек материалсем прокуроршăн совет граждăнĕсене айăплама пачах çителĕксĕр. Павловпа Корнилова айăплакан материалсем пурнăçпа, чăнлăхпа çыхăнманни куçкĕретех палăра пуçларĕ, теççĕ.

Америка самолечĕсем Японин хулисем çине вĕçсе пырса тапăнни

ТОКИО, апрелĕн 18-мĕш. (ТАСС). Домэй Цусин агентстви Япони командованийĕн официальнăй пĕлтерĕвне пичетлесе кăларнă. Пĕлтерÿре çапла каланă: «Апрелĕн 18-мĕшĕнче 12 сехет те 30 минутăра Японии территорийĕ çинче Америка самолечĕсем курăннă. Вĕсем Токио, Иокогама, Нагоя тата Кобе хулисем çине бомбăсем пăрахнă. Пăрахнă бомбăсем тĕрлĕрен пулнă: фугаснăйсем тата вут хыптараканнисем. Асăннă хуласенче тăватталăшĕнче те пушарсем тухнă, вĕсене пушар командисемпе вырăнти халăх тăрăшнипе сÿнтернĕ.

Японин зенитнăй артиллерийĕ пенипе тата истребительсем çапăçнипе çав хуласем тĕлĕнче пулнă сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 9 самолетне персе антарнă.

Сывлăшран пырса тапăннă пирки панă тревога 7 сехет хушши пынă. Тревога пĕтнĕ хыççăн та хатĕр пулмалла тесе пĕлтернĕ, мĕншĕн тесен сывлăшран пырса тапăнасси çавăнтах татах та пулма пултарнă.

Токиори çар округĕн командованийĕ пĕлтернĕ тăрăх, сывлăшран пырса тапăннинчен хÿтĕлекен вырăнти оборонăн отрячĕсене «бомбăсем пăрахнинчен пулнă инкексене пĕтерес тĕлĕшпе питех те вăйлăн кĕрешме тивнĕ».

ЛОНДОН, апрелĕн 18-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Японии хулисем çине бомбăсем пăрахнă самолетсем Японии территорийĕ çывăхĕнче çÿрекен авианосецсем çинчен вĕçсе тухнă пулмалла. Агентство çапла пĕлтерет: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен çавăн пек задачăсене пурнăçа кĕртме юрăхлă авианосецсем ултăран кая мар пур.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

(Апрелĕн 15-мĕшпе 18-мĕш хушшинчи телеграммăсене пăхса тухни)

Вăрçă ĕçĕсем тата сывлăшри операцисем юлашки кунсенче пуринчен вăйлă Филиппинра пулса иртнĕ. Лусон утравĕ çинче Батаан çурутравне тытса илсе, японецсем Коррегидор ятлă вăйлă çирĕплетнĕ пĕчĕк утрава татăклăн штурмлама тытăннă. Çав утрав Манила заливне кĕнĕ çĕре вырнаçнă, ăна çаплах-ха Америка войскисем хÿтĕлесе тăраççĕ.

Филиппинра ытти чылай утравсем çинче те çапăçусем пыраççĕ. Давао утравĕ çинче Америка войскисем пĕчĕк группăсемпе кĕрешеççĕ, Давао, Дигос, Ламбонг тата ытти районсенче Японин войскисене тата транспортне кĕтмен çĕртен пыра-пыра атакăлаççĕ. Себу утравĕ çинче те хĕрÿ çапăçусем пуçланса кайнă, çав утрав çине Японии войскисем апрелĕн 10-мĕшĕнче пырса çитнĕ пулнă. Утрава хÿтĕлекенсем японецсене вăйлăн хирĕç тăраççĕ. Апрелĕн 16-мĕшĕнче Японин войскисем тата Пепэй утравĕ çине те пырса çитнĕ. Японецсем 8 транспорт çинчен десант антарнă. Десант антарнă чухне, вĕсене хÿтĕлесе, Японин çар карапĕсем çинчен персе тăнă тата авиацие те ĕçе кĕртнĕ. Америка войскисем японецсене хирĕç кĕрешеççĕ, анчах та утрав çинчи лару-тăру мĕнли çинчен тĕплĕн калакан сведенисемех çук-ха.

Апрелĕн 13-мĕшпе 14-мĕшĕсенче Америкăн бомбардировщикĕсем, Австралирен вĕçсе пырса, Филиппин çине вăйлăн тапăннă, Японин питех те кирлĕ çар объекчĕсене чылайĕшне атакăланă. Себу утравĕ çывăхĕнче Японин 3 транспортне путарнă, иккĕшне сиенленĕ. Кунсăр пуçне тата 3 самолетне персе антарнă. Себу хулинче японецсем йышăннă аэродрома атакăланă.

Бирмăра çапăçусем пĕтĕм фронт сарлакăшĕпех пыраççĕ. Иравади юханшывĕн районĕнче японецсем пăртак малалла куçнă. Англи войскисем Магве хулинчен çурçĕрелле чакнă. Чакнă чухне вĕсем Енангьяунгри нефть промыслисене çĕмĕрсе хăварнă. Сулахай флангра, Китай войскисем кĕрешнĕ çĕрте, японецсем çĕнĕрен пулăшу илсе вăйлăн атакăлаççĕ. Вĕсене хăйсен авиацийĕ пулăшса пырать. Çапла пулсан та, Китай войскисем вĕсен атакисене ăнăçлăн сире-сире пыраççĕ. Флангран пырса çапас тесе, японецсем Таин çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнчен наступлени пуçласа янă. Вĕсем Мандалай-Лашио чугунçулĕ тăрăх çул тытаççĕ. Фронтăн çак участокĕнче ĕçсем мĕнле пыни çинчен тĕплĕн пĕлтернисем çук-ха.

Çĕнĕ Британия, çĕнĕ Гвинея тата Тимор утравĕсем таврашĕнче, Австралирен çурçĕрелле, ĕлĕкхи пекех сывлăшри операцисем кăна пулса иртеççĕ. Юлашки кунсенче союзниксен авиацийĕ Рабаул (Çĕнĕ Британи), Лае (Çĕнĕ Гвинея) тата Купанг (Тимор) хуласем çине темиçе хутчен те вĕçсе пырса тапăннă. Японецсем йышăннă аэродромсем, портсем, пароходсем тата ытти çар объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Апрелĕн 17-мĕшĕнче Японин авиацийĕ Морсби порчĕ (Çĕнĕ Гвинеян кăнтăр çыранĕ) çине вĕçсе пырса тапăннă. Японин самолечĕсем 45 бомба пăрахнă. Сывлăшри çав атакăра Японин пĕр истребительне персе антарнă.

Индипе Китай хушшинче çĕнĕ çул тăваççĕ

ЛОНДОН, апрелĕн 17-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Индипе Китай хушшинчи çĕнĕ çула тунă çĕрте халь китаецсен 400 пин рабочийĕ ĕçлет. Çав çулăн Китайри участокĕн пысăк пайне туса пĕтернĕ пекех ĕнтĕ. Çак участок вăл Сычуань провинцин хĕвеланăç пайĕнчи Чэндуран Кăнтăр Сиканга (Тибет çумĕнчи чиккĕ патĕнче) Кандинпа Баан урлă каять. Çулăн халь тăвакан пайĕ Баанран пуçланать те Индири Çурçĕр Ассама Нинципа Чав урлă каять. Çак участокăн тăршшĕ, тÿрĕ линипе шутласан, 100 километра яхăн пулать.

Совет партизанĕсем фашистсен палачне вĕлернĕ

ЛОНДОН, апрелĕн 18-мĕш. (ТАСС). Лондонри радио, нимĕçсен «Дейче цейтунгин остланд» ятлă хаçачĕн сăмахĕсемпе çирĕплетсе, Германи полицийĕн генералĕ Вальтер Шталекера вилни çинчен пĕлтерет.

Шталекер ĕлĕкрех Прагăри гестапо начальникĕ пулса ĕçленĕ. Гитлеровецсем Чехословакие тытса илнĕ хыççăнхи вăхăтра, 1939 çулта, Шталекер Прагăра калама çук тискер ĕçсем тунă. Шталекер хушнипе чехсен университетне аркатса тăкнă, студентсене, интеллигентсене, рабочисене асаплантарнă. Совет Союзĕпе Германи хушшинче вăрçă пуçланса кайсан, Гитлер Шталекере гитлеровецсем тытса илнĕ совет районĕсене янă. Унта Шталекер совет партизанĕсене хирĕç çапăçакан карательнăй экспедицие пуç пулса ертсе пынă.

Халĕ Шталекере Украинăра совет партизанĕсем вĕлерни палăрчĕ. Кун пирки радиопередачăра çапла каланă:

«Чап та мухтав вырăс тăванăмăра, пĕтĕм халăхшăн мухтавлăн тавăрнăскере. Унăн хăюллă ĕçĕнчен нимĕç палачĕсем тата Прагăри урнă «квислингсем» хăраса чĕтресе тăччăр. Çакă вăл оккупантсене тата чехсен тăван çĕршывне сутакансене пĕтерсе тăкма мĕнпур чехсене чĕнет».

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Халăхăн паттăрлăхĕ

„Царицына хÿтĕлени“ кинокартинăн пĕрремĕш серийĕ

Нумай ĕмĕрсем иртĕç, çак аслă эпопейăн картинисем нихăçан та тĕксĕмленмĕç. Вĕсем пирĕн халăхăн ĕнерхипе паянхи паттăрла кĕрешĕвне çитес ĕмĕрсенче те çутатса тăрĕç. «Царицына хÿтĕлени» кино-эпопея вăл историллĕ картина кăна мар, вăл паянхи геройла кĕрешÿпе çыхăнса тăракан, пирĕн халăхăн паттăрлăхĕ ăçтан çăлкуçланса тухнине кăтартса паракан картина. Пирĕн революцин малтанхи тапхăрĕнчи çĕнтерÿсене, паянхи кĕрешĕве ертсе пынă пекех, Ленин—Сталин партийĕ, аслă полководец Сталин юлташ ертсе пырать.

1918 çул. Тин çеç çуралнă совет республикишĕн йывăр та хăрушă кунсем. Çамрăк республикăна йĕри-тавра контрреволюцие интервенцин ункки çавăрса илнĕ. Шурă казаксен контрреволюциллĕ çарĕсемпе ютçĕршыв интервенчĕсем пирĕн революцишĕн стратегиллĕ питех те пысăк вырăн йышăнса тăракан Царицын хулине Мускавран татса уйăрасшăн. Шуррисем Царицын мĕнле вырăн йышăнса тăнине ăнланаççĕ. Çавăнпа вĕсем хăйсен мĕнпур кĕтĕвĕсене Царицын çинелле хăваласа пыраççĕ. Царицын хулинче хăйĕнче те тăшмансем, сутăнчăксем йăва çавăрнă. Царицына хÿтĕлес ĕçре çар специалисчĕсем, кайран пуçĕпех тăшмансем енне куçнăскерсем, пуç пулса тăраççĕ.

Большевиксен партийĕ халăх умне йывăр задача лартать—Царицына хÿтĕлемелле, ăна мĕнле пулсан та çăлса хăвармалла. Царицына çухатни — вăл Çурçĕр-Кавказа çухатни, пĕтĕм республикăна, ахаль те выçă аптăранăскерне, çăкăрсăр тăратса хăварни пулать. Царицын тĕлĕнче контрреволюцин Хĕвел-тухăçĕнчи тата Кăнтăр-Хĕвеланăçĕнчи вăйĕсем пĕрлешме ĕмĕтленеççĕ. Вĕсен хура ĕмĕтне татмалла, вĕсен çулне пÿлсе лартмалла. Царицына хÿтĕлени ĕçрте тăшманăн вăйĕсене çапса аркатмалла.

Революцин аслă стратегĕ В. И. Ленин, çаксене лайăх ăнланса тăрса, Царицын хулине хăйĕн чи шанчăклă соратникне Сталин юлташа ярать. Революцин çулпуçĕсем Ленинпа Сталин халăх çине шанаççĕ. Хăйĕн ирĕклĕхĕпе чыслăхĕшĕн, хăйĕн пулас çутă кунçулĕпе телейĕшĕн кĕрешĕве çĕкленнĕ халăх революцин малтанхи тапхăрĕнче кĕрешсе илнĕ çĕнтерĕве хÿтĕлесе хăварма хăйĕнче вăй-хал тупатех. Царицын пролетариачĕ çак кĕрешÿре пĕччен мар. Кăнтăр-хĕвеланăç енчен Ворошиловăн Донбасра çуралнă çарĕ тăшман ункисем витĕр Царицын еннелле çĕмĕрсе килет. Ворошиловăн алла тин çеç хĕçпăшал тытнă войскисем, 700 километр тăршшĕ çула тăшмансен лайăх хĕçпăшалланнă çарĕсене хирĕç талпи-сыпписĕр çапăçса тухаççĕ. Çапăçу хирĕнче халăхăн чăн-чăн геройĕсем çуралаççĕ. Ворошиловăн çарне Лихая станцийĕ патĕнче нимĕç оккупанчĕсен пуç тÿпинчен пуçласа ура тупанне çитиччен хĕçпăшалланнă полкĕсем пÿлме хăтланаççĕ. Пĕчĕкçĕ станци çине нимĕçсем хăйсен артиллерийĕн мĕнпур вут-çулăмне тăкма тытăнаççĕ. Пĕтĕм çĕр талккишĕ снарядсем кисретсе çĕкленĕ тăпрапа, тусанпа, тĕтĕмпе витĕнет. Çакăнта пĕр чĕрĕ чун та юлман та пекех. Акă нимĕçсем пĕтĕм ÿт-пĕвĕпе тăрса паттăрсен ушкăнĕ çинелле хура пĕлĕтсем пек куçма тытăнаççĕ. Лару-тăру пачах та шанчăксăр пек. Анчах снарядсем пăтраштарса янă çĕр çинчен геройсен пуçĕсем çĕкленеççĕ. Çав вăхăтрах нимĕçсен сылтăм флангĕнчи пысăк мар сăрт çинчен пулемет шатăртаттарма тытăнать. Çакна ирсĕр нимĕçсем кĕтмен. Паçăр унта хĕрлисен икĕ геройĕ пулемет турттса хăпаратчĕç, анчах вĕсене нимĕçсен автоматчикĕ персе ÿкерчĕ-çке. Ун хыççăн сăрт тайлăкĕнче ларса юлнă пĕччен пулемет патне тепĕр боец хăпарма тытăннăччĕ. Нимĕç автоматчикĕ ăна та персе ÿкернĕччĕ. Ун хыççăн окопран кайран тужурка тăхăннă çын сиксе тухса çав пулемет патне чупма тытăннăччĕ. Вăл командарм Ворошилов пулнă. Нимĕç автоматчикĕ ун çине те нумай вут тăкрĕ. Анчах пирĕн командарм нимĕç автоматчикĕнчен чеерех пулчĕ. Вăл пуля лекнĕ пек çĕр çине выртрĕ те чылайччен хускалмарĕ. Ун çинчен нимĕçсем шухăшлама пăрахрĕç. Акă халь ĕнтĕ ирсĕр нимĕçсем хăйсен юратнă «психикăллă атакине» пуçласа ярсан, флангри сăрт çинчи пулемет сасартăк ĕçлеме тытăнчĕ. Ку ĕнтĕ нимĕçсене улталанă командарм Ворошилов оккупантсем çине вилĕмле вут тăкать. Чи хĕрÿллĕ вăхăтра ун патне казак Мартын Перчихин (арт. М. Жеров) утпа сиктерсе пырать. Ворошиловăн вучĕ тăшмансен ретĕсене арпаштарса ярать. Çĕр оккупантсен виллисемпе витĕнет. Çакăнпа хавхаланса пирĕннисем окопсенчен сике-сике тухаççĕ те, хăватлăн «ура» кăшкăрса, тăшмансем çине ыткăнаççĕ. Çапла хĕрлисем нимĕçсене аркатса тăкаççĕ. Çак картина отечественнăй аслă вăрçăн апизочĕсене куç умне кăларса тăратать.

Умра йывăрлăхсем нумай-ха. Царицын инçе. Анчах Царицынра—Сталин. Царицын шанчăклă аллăра. Çакă хавхалантарать геройсене. Вĕсем нимĕнле чăрмав умĕнче те чарăнса тăмаççĕ. Вĕсем Дон шывĕ урлă каçас кĕпере шуррисем взрыв туса сирпĕнтернĕ. Мирлĕ вăхăтра çавăн пек кĕпере юсема çулталăк кирлĕ. Çапла калать инженер. Анчах кĕтсе тăма вăхăт çук.

— Икĕ эрнере туса пĕтермелле, тет командарм Ворошилов. Инженер çакна хăйĕнчен кулнă пек ăнланать.

— Материал çук,—тет инженер.—Йывăçран тусан тÿсеймест.—

— Материалăн та революцие пăхăнмалла,—тет Ворошилов. Чăн та, революцие пăхăнакан çынсемпе материалсем тÿсĕмлĕ пулаççĕ, кĕпере кĕске вăхăтрах туса çитереççĕ. Ворошиловăн эшелонĕсем кĕпер урлă каçма тытăнаççĕ.

Çав вăхăтра Царицын хулинче чрезвычайнăй комиссар Сталин юлташ хулари лару-тăрăва пĕтĕмпех тепĕр майлă — революци майлă çавăрса хурать. Халăх хушшинчен вăл хулана хÿтĕлес ĕçĕн чăн-чăн организаторĕсене тупать. Çапла халиччен нимĕнпе те палăрса тăман работница Катя Давыдова (арт. Мясникова) хулари ĕççĕр çынсене мобилизацилесе, Царицын йĕри-тавра окопсем чавтарать. Предприятисенчи рабочисем зажигалкăсем тăвас вырăнне хĕçпăшал тума тытăнаççĕ. Халиччен хулана хÿтĕлес ĕçе хăйсен аллинче тытса тăнă çар специалисчĕсен буржуаллă стратегине Сталин юлташ тăрă шыв çине кăларса, хăйĕн революциллĕ стратегине рабочисене ăнлантарса парать.

Ворошиловăн çарĕ тăшманăн ункине çĕмĕрсе килни Сталинăн шанчăкне ытларах çирĕплетет, Царицын пролетариатне хавхалантарать. Çапла пулас çĕнтерÿ валли хурçă пек çирĕп никĕс хывăнать.

Атăлăн чăнкă çыранĕсем. Куç умĕнче — салтак шинелĕ тăхăннă аслă полководец Сталин юлташ. Вăл хăйĕн таврăн шухăшлă куçĕсемпе, полководец куçĕсемпе тăван хулана пăхса çаврăнать. Акă аякран юланутçăсем, Ворошилов çарĕн малтанхи эшелонĕсем курăнса каяççĕ. Малта юланутпа сăран тужурка тăхăннă çын Сталин патнелле сиктерсе пырать. Вăл — командарм Ворошилов. Çулпуç Сталин юлташ çамрăк командарма, аншĕ тăван ывăлне ыталаса илнĕ пек, ыталаса илет. Фильм çакăнпа вĕçленет.

Ку вăл «Царицына хÿтĕлени» кино-эпопейăн «Ворошилов похочĕ» ятлă пĕрремĕш пайĕ. Çак эпопейăпа пирĕн совет кино искусстви отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче çĕнĕ çĕнтерÿ тунă. Сталин рольне выляккан М. Гелованни, Ворошилов рольне выляккан Боголюбов артистсем чаплă çĕнтерÿ туса, Сталинла преми илме тивĕçлĕ пулчĕç.

«Царицына хÿтĕлени» кинокартинăра кăтартнă революциллĕ кĕрешÿ вăл паянхи отечественнăй аслă вăрçăпа тачăн çыхăнса тăрать. Паянхи çĕнтерÿсене те, ун чухнехи пекех, пирĕн аслă полководец Сталин юлташ организацилет. Çакă вăл мĕнпур совет халăхне отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче нимĕç оккупанчĕсене çапса аркатма, сывăх вăхăтрах çĕнтерÿ тума мобилизацилет.

А. ЭСХЕЛЬ.

Коллектив работников Чебоксарского кинотеатра выражает глубокое соболезнование директору
СОЛОВЬЕВУ И. А.
по поводу смерти его отца
АНТОНА АФАНАСЬЕВИЧА

Коллектив работников Управления Кинофикации, партийная организация и О. К. Союза Кинофоторабoтников выражает глубокое соболезнование директору Чебоксарского Кинотеатра
СОЛОВЬЕВУ И. А.
по поводу смерти его отца
АНТОНА АФАНАСЬЕВИЧА

ЗАГОТЖИВ КОНТОРЕ
на постоянную работу в Чебоксарах
ТРЕБУЮТСЯ
зам. главного бухгалтера, бухгалтер, секретарь-машинистка и старший конюх.
Обращаться: гор. Чебоксары, Учительская ул., 39, тел. № 6—20.

ЧУВАШПРОМСОЮЗУ
ТРЕБУЮТСЯ
руководитель металлгруппы, руководитель разных промыслов, завхоз.
Адрес: гор. Чебоксары, ул. Ленина, 6.

ЗАВОДУ ТРЕБУЮТСЯ:
инженеры и техники: технологи по холодной обработке металла, по сварочным работам, по литейному делу, металлург по цветному литью, инженеры по приборам, металловед по оборудованию, по инструменту и конструкторы, техники-планировщики, экономисты, техник-сметчик, складские, снабженческие работники, бухгалтеры; рабочие следующих квалификаций: токаря, фрезеровщики, строгальщики, долбежники, термисты, станочник по дереву, столяры, плотники, слесарь, электро-монтеры, слаботочники, радист, шорник-смазчик, печник, формовщики, прессовщики, штамповщики, каменщики, штукатуры, стекольщик, лаковары, грузчики, подсобные рабочие, уборщицы, курьеры.
Требуются также вахтеры-охранники (мужчины и женщины), пожарные работники.
Вахтеры, пожарные работники и грузчики обеспечиваются общежитием.
Принимаются переквалификанты (взрослые ученики от 16 лет) по специальностям: лаковары, слесари, прессовщики, машинисты, резчики, монтеры, обрубщики, формовщики, штамповщицы и др.
Обращаться от 10 до 14 час. по адресу: гор. Чебоксары, Ленинградская ул., 38, бюро пропусков.

Мартăн 30-мĕшĕнче Шупашкарта КĔСРЕ çухалнă. Тĕсĕ тимĕр-кăвакрах, 4 çулта.
Пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: Красноармейски район, „Красное Сормово“ колхоз правленине.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 745 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260.